28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРЬ 17 ЮНКУН 202 (6953) №

...ая библиотека имени В. И. Ленина Отдел Национальной Литературы

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Натуроплата планне çывăх вăхăтрах тултарассишĕн!

Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса государствăна тырпул памалли плана октябрь уйăхĕнче пĕтĕмпех тултарма пулчĕç.

Государствăна тырпул памалли плана МТС машинисемпе ĕçленĕшĕн натуроплата тÿлесси те кĕрет. Малта пыракан колхозсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене пурнăçласа, МТС машинисемпе усă курнăшăн тÿлемелли натуроплатăна та тÿлесе татаççĕ.

Пирĕн государство МТС-сем урлă колхозсене пысăк пулăшу парать. МТС машинисем колхозсене ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă ирттерме пулăшаççĕ. Халĕ кашни колхозник тата колхозница МТС колхозсене ялхуçалăх ĕçĕнче мĕнле пулăшнине лайăх пĕлет. Çакна нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать. Первомайски районри Шурут ялĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозах илсе кăтартма пулать. Варçă пуçланнă çулсенчен тытăнсах кунта МТС-ăн тракторĕсем тата ытти машинисем татти-сыпписĕр ĕçленĕ, пĕтĕм çĕр лаптăкне вăхăтра акса хăварма май панă. Красноармейски районри «Янмурзино» колхоз иртнĕ çулсенче тата кăçал та районра чăн малтан ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлерĕ. Кăçал çак колхоз районри ытти колхозсенчен нумай малтан тырпул пухса кĕртнĕ тата государство умĕнчи обязательствăсене те парса татнă. Çак колхозра МТС машинисемпе ĕçленĕ участокран кашни гектартан вăтам шутпа 16 центнер тĕштырă пухса илнĕ. «Янмурзино» колхоз натуроплата йĕркипе памалли тырра сентябрь уйăхĕнчех парса татнă. Çавăн пекех «Сила», Молотов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те натуроплатăна тÿлесе татнă. Йĕпреç районĕ туртăм вăйĕ енчен йывăрлăхра тăракан районсенчен пĕри пулса тăрать. Çак районри трактористсемпе трактористкăсем колхозсене тырпула вăхăтра пухса кĕртме ытларах пулăшас кăмăлпа ĕçлеççĕ, МТС çулран-çулах хăйĕн планне ытлашшипех тултарса пырать. Кăçал та çак МТС хăйĕн планне 130 процент ытла тултарнă. Йĕпреç районĕ МТС ĕçленĕшĕн тÿлемелли натуроплата планне октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 85 процент тултарнă. Шăмăршă МТС комбайнерĕ Фадеев юлташ кашни çулах пĕр комбайнпа 300—400 гектар тырă вырса пухса, çĕршер çын вырăнне ĕçлет, çавна май вăл колхозсене тырпула вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртме пулăшать. Йĕпреç МТС комбайнерĕ Семенов, Елчĕк МТС комбайнерĕ Чернов, Çĕмĕрле МТС комбайнерĕ Михайлов тата ыттисем те, государство вĕсене шанса панă чаплă машинăсемпе туллин усă курса, 300—400-шер гектар тырă вырса, колхозсене тырпул пухса кĕртме пулăшаççĕ. МТС машинисем çине халĕ пур колхозсенче те пысăк шанчăк хураççĕ. Çавăн пирки те ĕнтĕ колхозсем МТС машинисемпе ĕçленĕшĕн тÿлемелли натуроплатăна хăйсен чыслă тивĕçĕ тесе шутлаççĕ.

Варнар районĕнчи колхозсем октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырпул пĕтĕмпех парса татрĕç. Çавăнпа пĕрлех вĕсем МТС машинисемпе ĕçленĕшĕн тÿлемелли натуроплатăна МТС счечĕсем тăрăх ытлашшипех тÿлесе татнă. Пăрачкав районĕнчи колхозсем натуроплатăна 95,8 процент, Элĕк районĕнчи колхозсем 76 процент, Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем 75 процент тÿленĕ.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, МТС машинисемпе ĕçленĕшĕн натуроплата тÿлесси республикăра çителĕксĕр пырать-ха: октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне республика плана пурĕ те 63,2 процент кăна тултарнă. Натуроплата шучĕпе тырă парасси Кувакино, Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле, Тăвай, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă районĕсенче начар пырать. Çак районсем натуроплата тÿлемелли плана çуррине те парса татман. Муркаш районĕ государствăна обязательство тăрăх тырă паян-ыран парса татать, çапах вăхăтрах Ишлей МТС-ĕ ĕçленĕшĕн тÿлемелли натуроплата планне çак район пурĕ те 69 процент кăна тултарнă. Советски район вара МТС машинисем ĕçленĕшĕн тÿлемелли натуроплата планне 28 процент çеç тултарнă.

Натуроплатăна колхозсем вăхăтра тÿлесси МТС директорĕсенчен тата вĕсен аппарачĕнчен те нумай килет. МТС-сем ĕçе тунă хыççăнах колхозсене счет тăратмалла тата натуроплата тÿленине тĕрĕслесех тăмалла. Натуроплатăна вăхăтра тÿлессишĕн МТС директорĕ ответлă пулса тăрать. Уйрăм МТС директорĕсем çак ответлăха туйса ĕçлемеççĕ-ха. Акă, Ишлей МТС-нех илер. МТС кăçал начар мар ĕçленĕ, вăл тракторсемпе тумалли ĕç планне 123 процент ытла тултарнă. Колхозсенчен натуроплата илессине вара çак районра колхозсене тăратнă счетсем тăрăх та 60 процент кăна тултарнă. Унсăр пуçне, МТС çак вăхăта çитсе те Муркаш районĕнчи колхозсенче ĕçленĕшĕн 350 тоннăлăх счет тăратман. Буславкка МТС-ĕ хăйĕн ĕçĕпе малта пыракан станцисен шутĕнче тăрать. Çултаăкри ĕç планне вăл 141 процент тултарнă. Çав вăхăтрах натуроплата тÿлемелли плана çак МТС ĕçлекен колхозсем пурĕ те 62 процент кăна тултарнă. «Новый путь», «Ударник», Молотов, Каганович ячĕсемпе тăракан колхозсем натуроплата тÿлемелли плана çуррине те пурнăçламан. «Новый путь» колхоз МТС машинисемпе ĕçленĕшĕн кăçал 70 тонна ытла тÿлемелле, паянхи куна вара пурĕ те 22 тонна кăна тÿленĕ. Çак тĕслĕхсем МТС директорне Лаврентьев юлташа та пăлля, анчах вăл çапах та нимĕнех те тумасть-ха.

Натуроплата тÿлесси государство умĕнчи обязательствăпа пĕрех шутланать. Çак ĕçе пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле.

МТС директорĕсен натуроплатăна колхозсем вăхăтра тÿлетчĕр тесе пур майсемпе те пулăшмалла: хăйсен машинисене памалла тата ытти те. Анчах уйрăм МТС-сен директорĕсем çакна кирлĕ пек ăнланса илмен-ха. Елчĕк МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тÿлемелли плана районри колхозсем 67,1 процент тултарнă. МТС-ăн ĕçлеме пултаракан грузовой автомашинăсем те, горючи те пур. Анчах МТС вăл машинăсемпе колхозсенчен натуроплата тыррине турттарас вырăнне ялпа валли Шупашкартан тĕрлĕ таварсем турттарать. Çапла ĕнтĕ, МТС директорĕ Яшин юлташ натуроплата планне тултарассишĕн ответлăха туйса ĕçлени курăнсах каймасть.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене тунă чухне МТС çулталăкри плана тултарнине кăна мар, МТС ĕçленĕ колхозсем натуроплатăна вăхăтра тÿлесе татнине те шута илеççĕ. МТС машинисемпе ĕçленĕшĕн натуроплата вăхăтра тÿлени ăмăртура татса паракан ыйту пулса тăрать.

Государствăна тырпул, çĕрулми пахчаçимĕç парса татмалли улăхлăх иртсе пырать. МТС машинăсемпе ĕçленĕшĕн тÿлемелли натуроплатăна çывăх кунсенчех парса татассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешер!

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

Государствăна тырă парса татнă

Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ял Советне кĕрекен Ленин ячĕпе тăракан тата «Журавлевка» колхозсем октябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 3080 центнер панă. Çак тырра хатĕрлев пунктне турттарнă чухне лашасемсĕр пуçне 60 вăкăрпа тата ĕнепе усă курнă.

Вăкăрсемпе тырă турттарас ĕçре комсомолецсем лайăх ĕçлерĕç. Государствăна тырă пама тытăннăранпа А. Петрянкин юлташ вăкăрпа 100 центнер, Молоствов 117 центнер, И. Светлов 98 центнер турттарнă.

Колхоз государство умĕнчи хăйĕн обязательствине тултарнă хыççăн, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 113 центнер тырă леçрĕ.

Ленин ячĕпе тăракан тата «Журавлевка» колхозсем çĕрулмипе пахчаçимĕç кăларса пĕтерчĕç тата государствăна та парса татрĕç.

Çак кунсенчех авăн çапса пĕтереççĕ.

Н. ВИССАРИОНОВ,
Ял Совет председателĕ.

* * *

Советски районри 42 колхоз государствăна тырă парса татнă. «Сеятель» колхоз—372 пăт, Буденный ячĕпе тăракан колхоз—600 пăт, «Электросвет» колхоз—260 пăт, Жуков ячĕпе тăракан колхоз—115 пăт, «Восток» колхоз—306 пăт планран ирттерсе тырă панă. Районĕпе пĕтĕмпе 167 тонна планран ирттерсе тырă панă.

* * *

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи 28 колхоз государствăна тырă парса татнă. «Пишевик» колхоз—360 пăт, «Шордан» колхоз—1.182 пăт, «Восток» колхоз—348 пăт, Киров ячĕпе тăракан колхоз—270 пăт планран ирттерсе тырă панă.

* * *

Сĕнтĕр районĕнче «Колос» тата «Сеялка» колхозсем пуçарнипе Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă параççĕ. Янăм ял Советĕнчи колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 1.680 центнер тырă леçсе панă. Пушкăрт ял Советĕнчи «Ударник» колхоз 120 пăт, «13 лет РККА» колхоз 120 пăт, «Заря» колхоз 180 пăт тырă панă.

Юнкă ял Советĕнчи 1905 çулхи революци ячĕпе тăракан колхоз та государствăна кăçалхи çулшăн тырă парса татнă хыççăн, планран ирттерсе, Хĕрлĕ Çар фондне 420 пăт тырă панă. Çак ял Советĕнчи «Новая Юнга» тата «Правда» колхозсем те государствăна тырă, çĕрулми тата пахчаçимĕç парса татнă. Халĕ Хĕрлĕ Çар фондне тырă тата çĕрулми параççĕ.

* * *

ÇĔРПУ, октябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 75 колхозран 58 колхоз государствăна тырă парса татрĕç. Халĕ çак колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ. Паянхи кун тĕлне районĕпе 6.000 пăт ытла панă. «Ĕмĕт» колхоз 400 пăт, «Новая жизнь» колхоз 285 пăт, Ильич ячĕпе тăракан колхоз 350 пăт панă.

А. ИВАНОВ.

Председательсем улшăнаççĕ, колхоз çав-çавах начар ĕçлет...

Шăхасан районĕнчи малта пыракан колхозсем пур ĕçсене те вăхăтра тата лайăх туса пыраççĕ. Уйхир ĕçĕсене агротехникăна пăхăнса туса ирттереççĕ, çапла майпа çулсеренех тухăçлă тырпул, пахчаçимĕç пухса илеççĕ. Çĕнĕ Чалкасси ял Советĕнчи «Новая жизнь» колхозах илер. Ку колхоз государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татассишĕн, артель хуçалăхне аталантарассишĕн, колхозниксен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçлет. Çакă вăл йăлтах ĕçе тĕрĕс те пĕлсе йĕркеленинчен тата колхозниксем хушшинче ăнлантару ĕçне тивĕçлипе организациленинчен килет. Çавăнпа кунта колхозниксем те ĕçе пĕр çын пек кар тухаççĕ, кашни ĕçе вăхăтра та лайăх туса ирттермешкĕн хăйсен мĕнпур вăйне хураççĕ.

Иртнĕ çулта колхоз кĕрхи çĕртме сухине вăхăтра, лайăх туса хăварчĕ, кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене районра чи малтан туса ирттерчĕ. Тăрăшса ĕçлении результачĕ те аван: кăçал «Новая жизнь» колхоз нихăçанхинчен вăйлă тырпул пухса илчĕ: кашни гектартан вăтам шутпа ыраш 17-шер центнер, урпа 22,5 центнер, пăрçа — 19 центнер, сĕлĕ 21-шер центнер пухса кĕртрĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕ, государствăна тырă памалли çулталăкри плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕ.

Хăшпĕр юлса пыракан колхозсенче: «Новая жизнь» колхозан çĕре лайăхрах, нÿрлĕх тытать, çавăнпа вăл вăйлă тырпул туса илет», теççĕ. Çакă вăл пачах тĕрĕс мар. Çĕртен пысăк тупăш илес тетпĕр пулсан, ăна тислĕкпе тата тĕрлĕ имçамсемпе çемçетмелле. «Новая жизнь» колхоз 1944 çулта кĕрхи çĕртме айне 928 лав тислĕк тăкса хăварнă. Кăçал та уй-хире 1250 тонна ытла тислĕк кăларнă. Кунта мĕнпурĕ те ĕçе йĕркелеме пĕлни, колхоз ĕçне ĕçлеме пултаракан кашни колхозника явăçтарни татса парать. Ĕç дисциплинне çирĕплетсе пынипе колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем пачах çукки те уççăнах кăтартса парать.

Çавăн пекех районра малта пыракан «Красный партизан», «Активист», Молотов ячĕпе тăракан, «Трактор», Енĕш ял Советĕнчи «Новая жизнь» колхозсем те государствăна тырпул, çĕрулмипе пахчаçимĕçсем парса татрĕç. «Красный партизан» колхоз государствăна колхозшăн çĕрулмипе пахчаçимĕçсем парса татнипе пĕрлех, колхозниксемшĕн те çĕрулми парса татрĕ. Çак колхозсем государствăна кăçалхи çулшăн аш-какай, сĕт-çу тата ытти парăмсене те срокчен парса татрĕç.

Анчах тырпула пухса кĕртес, государствăна тырă парас тĕлĕшпе хăшпĕр колхозсем питех те кая юлса пыраççĕ. Матьшури «Молодой колхозник» колхоз уйрăмах юлса пырать. Чи малтанах, вăл юлса пыни кунта колхоз председателĕсене тăтăшах улăштарса тăнинчен килет. Виçĕ çул хушшинче кăна «Молодой колхозник» колхоз председателĕ пулма тăвата çынна суйласа лартрĕç. Ку тĕлĕшпе вара ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен отделĕ çинчен кашнах калаçа хăвармалла. Çĕнĕрен суйласа лартнă председательсене вăл ĕçре кирлĕ пулăшу парса пымарĕ, вĕсен ĕçĕпе интересленмерĕ, контроллесе тăмарĕ. 1944 çулта «Молодой колхозник» председателĕ пулса колхоз агрономĕ Е. Игнатьев юлташ ĕçлетчĕ. Вăл ертсе пынипе тырпула вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕç, пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне Петров юлташа Игнатьев темшĕн килĕшмен, ăна часах «Игнатьев колхоза ертсе пыма пултараймасть, çаврăнаçуллăх çук», тесе ĕçрен хăтарчĕç. Колхоз председателĕ пулма çывăхри ялтан П. Сильвестрова суйласа хăварчĕç. Сильвестров ĕçкĕ енне сулăнчĕ, колхоз пурлăхне салатас çул çине тăчĕ. Районри руководительсене çак фактсем нимĕн чухлĕ те пăшăрхантарман. Мĕншĕн тесен, Сильвестров районри работниксем валли кăна икĕ пентнер тырă расходланă, темиçе пуç сурăх пуснă. Районри прокурорăн помощникĕ К. Иванова çеç колхоз амбарĕнчен нимĕнле документсăр, укçа тÿлемесĕр икĕ пăт тулă, икĕ килограмм пыл илсе кайнă. Çав сăлтавсене пулах колхоз председателĕ тĕрĕс мар çул çине тăчĕ. Вăл колхозниксем валли пĕрлешÿллĕ столовăй организациleme хатĕрлесе хунă 58 пентнер çăнăха тĕрлĕ майсемпе салатса пĕтернĕ. Государствăна тырă парас ĕçе Сильвестров хăй чăрмантарса пынă. Ялхуçалăх машинисемпе усă курассине хирĕçле пырса, 3 жнейкăпа сеялкăна тата молотилкăна сарайне пуçтарса хурса питĕрсе илнĕ. Петров тата ытти юлташсем тем тĕрлĕ хÿтĕленĕ пулсан та, Сильвестрова председательтен кăларса суда пама тивнĕ. Халĕ «Молодой колхозник» колхозăн председателĕ пулса М. Макаров юлташ ĕçлет. Анчах иртнĕ вăхăтри йăнăшсенчен вăл кирлĕ пек вывод туман-ха. Колхоз çаплипех районра чи кайра сĕтĕрĕнсе пырать.

Районра «Красный пахарь», «Герой», «Красный Октябрь», «Красный луч», «Правда», «Ударник» колхозсем те юлса пыраççĕ. Вĕсем государствăна тырă памалли обязательствăсене çуррине яхăн кăна тултарнă.

Мĕншĕн çак колхозсем кая юлса пыраççĕ? Çав колхозсен руководителĕсем колхозниксене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухман, уйрăм сдельщинăпа ĕçлессине йĕркелемен. Колхоз председателĕсем вара хăйсем тавра колхоз активне пĕтĕçтермен, артель ĕçĕпе сыхăнса тăракан массăллă ăнлантару ĕçне кирлĕ пек туса пымаççĕ. ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕ те çак колхозсем çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхман.

ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн колхозсен пурнăçĕпе тĕплĕнрех паллашмалла. Юлса пыракан колхозсен председателĕсемпе уйрăмăн калаçмалла, вĕсене ĕçре кирлĕ пулăшăва куллен парса тăмалла.

В. ВАРБУСЬ.

Единоличниксем хăйсен парăмне тÿлесе татман

ЭЛĔК, октябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем государствăна тырпул, çĕрулми, пахчаçимĕç пĕтĕмпех парса татассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Тырпул, çĕрулми, пахчаçимĕç тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парса татнă колхозсен шучĕ пĕчĕк мар ĕнтĕ. Тельман ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырпул, çĕрулми тата пахчаçимĕç парса татрĕ, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене те çак кунсенчех парса татать. Колхозниксем те хăйсен парăмĕсене вăхăтра парса татаççĕ.

Анчах та чылай ял Совечĕсенче уйрăм хуçалăхпа пурăнакансене тивĕççĕр çăмăллăх пани курăнать. Элекенушкĕн ял Советĕнчи Пĕчĕк Шемшеш ялĕнче уйрăм хуçалăхпа пурăнакан Илья Никитин икĕ виçĕ çул хушши государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене йĕркеллĕн пурнăçласа пымасть. Унăн 224 килограмм аш-какай, 130 çăмарта памалла, 2.000 тенкĕ тĕрлĕ налогсем тÿлемелле. Çавăн пекех Евдокия Соколовăн та 384 килограмм аш-какай, 760 çăмарта, 174 килограмм тĕштырă памалла. Уйрăм хуçалăхпа пурăнакан А. Игнатьева хуçалăхĕнче 1 лаша, 5 ĕне выльăх, 20 сурăх, кайăккĕшĕксем те нумай. Вăл та государство умĕнчи парăмсене тÿлесе татман.

Ял Совет председателĕ Архипов юлташ çаксене пурне те курать, анчах та уйрăм хуçалăхпа пурăнакан хресченсене хăйсен обязательствине вăхăтра тÿлеттерес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть, вĕсем ĕлкĕрĕç-ха, тесе хÿтĕлесе тăрать.

Ф. КАЧЕЕВ.

ГРУША ЙЫВĂÇÇИСЕМ ЫТЛАРАХ ЛАРТАР

Груша йывăççисем кĕске вăхăтрах çитĕнсе çитсе çимĕç пама тытăнаççĕ. Иртнĕ çулсенче çак ĕç питомниксенче лартмалли çамрăк йывăççем çуккипе чарăнса тăнă. Унсăр пуçне, хăшпĕр колхозсенче çак çимĕç йывăççине пĕр сăлтавсăрах начар йывăç тесе пăрахăçа кăларнă.

Кăçал Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Çĕрпÿри питомникĕ колхозсем валли груша йывăççисем 7.000 тĕп ытла çитĕнтернĕ. Сăнаса пăхнă тăрăх, вăл йывăççем пирĕн республикăра лайăх ÿсеççĕ тата лартнă хыççăн 6—7 çултан çимĕç пама тытăнаççĕ. Пирĕн республикăри питомниксенче халĕ хĕллехи сивĕсене чăтма пултаракан «Бере зимняя Мичурина», «Тонковетка» тата çимĕçне типĕтме юрăхлă «Бессемянка» сорчĕсем пур.

Районри çĕрĕç пайĕсемпе агрономсем колхозсенче груша йывăççисен усси çинчен тата çак йывăççене мĕнле пăхса çитĕнтермелли çинчен колхозниксемпе служащисене тата рабочисене ăнлантарса памалла. Кашни колхозăн садĕнче, колхозниксемпе служащисен тата рабочисен кил вырăнĕсенче те груша йывăççисем лартма тăрăшмалла. Груша йывăççисĕр пĕр сад та пулмалла мар.

Р. ОСАНОВ.

Совет çĕршывĕ тăрăх

Л. Н. ТОЛСТОЙ ВИЛНИ 35 ÇУЛ ТУЛТАРАС УМĔН

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче вырăссен аслă писателĕ Л. Н. Толстой вилни 35 çул тултарать. Çав куна СССР Наука Академийĕн литература институчĕ уйрăм лару туса палăртать. Унта Ленинградри университетăн студенчĕсемпе профессорĕсем те пулаççĕ. Аслă шкулсенче Л. Н. Толстойăн пурнăçĕпе ĕçĕ çинчен лекцисемпе докладсем туса параççĕ.

Толстой творчествине тĕпчес тĕлĕшпе ĕçлекен паллă профессор В. М. Эйхенбаум Толстой çинчен калакан монографин III-мĕш томне çырса пĕтерет.

В. С. Спиридонов профессор Л. Н. Толстойăн «Ача-пăча калавĕсем» ятлă кĕнекине пичете хатĕрленĕ. Ку кĕнекене 1872—1875 çулсенче çырнă 200 калава яхăн кĕнĕ. Çав калавсем Толстойăн 14 çул хушшинчи ĕçĕн результачĕсем пулса тăраççĕ. (ТАСС).

ЛЫСЬВА МЕТАЛЛУРГĔСЕМ ТУСА КĂЛАРНĂ ЯПАЛАСЕМ

ЛЫСЬВА, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Молотов, Кизел, Чусовая, Соликамск тата Молотов облаçĕнчи ытти хуласемпе ялсене те эмальпе витнĕ тата пинкланă тимĕртен тунă япаласем—кашăксем, вилкăсем, çĕçĕсем, тĕрлĕрен савăт-сапасем нумай пырса тăраççĕ. Çав япаласене пурне те Лысьвари металлурги заводĕнче туса кăларнă. Вăл заводран Совет Союзĕнчи ытти хуласене те нумай япаласем янă.

Кунта куллен кирлĕ таварсене 1940 çулхи чухлех туса кăларма тытăннă, малашне вăл ĕç татах та вăйлăрах аталанса пымалла.

Ÿкерчĕк çинче: Ленинградри Киров заводĕнче 45-шер çул ытла ĕçленĕ работниксем—мартен цехĕнчи старши мастер И. И. Вострукoв, мастер-сталевар Г. К. Абразумов, инженер-технолог А. Л. Матвеев, цехри старши технолог А. Л. Буров тата старши инженер С. К. Никифоров. Вĕсем темиçе çĕр çамрăк рабочие вĕрентсе хатĕрленĕ, халь те вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

В. КАПУСТИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

КИРОВ ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН ЗАВОД ÇĔНĔ ЙЫШШИ ТРАКТОРСЕМ ТУСА КĂЛАРМА ПУÇЛАТЬ

Киров ячĕпе тăракан завод «С-80» йышши çĕнĕ тракторсем туса кăларма хатĕрленнĕ. Çакă вăл «Сталинец» йышши 80 лаша вăйлă çĕнĕ трактор пулса тăрать.

Завод коллективĕ «Сталинец-80» йышши малтанхи трактора октябрьуявĕ тĕлне туса кăларма сăмах панă. (ТАСС).

СОВЕТ СУДНИСЕМ ВĂТАÇĔР ТИНĔСРЕ ÇÿРЕМЕ ПУÇЛАНĂ

ОДЕССА, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Хура тинĕс çинчи суту-илÿ флочĕн суднисем Вăтаçĕр тинĕсри портсене малтанхи хут тухса кайнă. Çак кунсенче Албание океансем çинче çÿрекен «Фридрих Энгельс» ятлă пысăк пароход тухса кайнă. Албанирен вăл Далмапири Спалато ятлă порта каять. Ку пароход хыççăн Вăтаçĕр тинĕсе океансем тăрăх çÿрекен тепĕр пысăк «Димитров» ятлă пароход тухнă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ ТИНĔССЕНЧЕ КИТСЕМ ТЫТНИ

ВЛАДИВОСТОК, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕрти анлă тинĕссенче çăра тĕтре тăрать. Кит кĕтĕвĕсем халĕ ĕнтĕ кăнтăр еннелле куçма тытăннă. Ишсе çÿрекен консерв завочĕсенче пиншер пăт кит çăвĕпе консерв ещĕкĕсем туса хунă.

Нумаях та пулмасть питĕ вăйлă çил-тăвăл пуçланса кайнă. Çакăн пек çанталăкра тинĕсе тухма хăрушă. Анчах та кит тытакансем тинĕсе тухса кайнă. Малтан «Авангард» пароход тухнă. Ăна Нефедьев капитан ертсе пынă. Тинĕс тĕмĕн пекех хумханнă пулин те Панов гарпунер часах пĕр пысăк кита, унтан вара кит кĕтĕвне асăрханă. Пароход çав кĕтÿ патнелле çывхарса пынă. «Авангард» пароход кит кĕтĕвĕ çинчен флотилие пĕлтернĕ. Тепĕр çур сехетрен çав вырăна «Энтузиаст» тата «Трудфронт» пароходсем çитнĕ. Пĕр кун хушшинче вĕсем 50—60 тонна туртакан 17 кита тытнă.

СЯСЬРИ ХУТПА ЦЕЛЛЮЛОЗА КОМБИНАЧĔН МАЛТАНХИ ПРОДУКЦИЙĔ

ЛЕНИНГРАД, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Фашистла оккупантсем çĕмĕрсе хăварнă Сясьри хутпа целлюлоза комбинатне юсаса ура çине тăратас ĕç ăнăçлă пырать. Кунта халĕ целлюлоза завочĕн малтанхи пайне ĕçе янă. Кислота цехĕнче икĕ хуран ĕçлеме пуçланă. Çывăх вăхăтрах типĕтмелли агрегатсем ĕçлеме пуçлаççĕ. Комбинат малтанхи 170 тонна целлюлозăна туса кăларнă.

Государствăн архитектура совечĕн пĕррремĕш ларăвĕ

Хуласенче тата поселоксенче пурăнма лартакан çуртсем мĕнле пулмалла? Çав ыйтăва Государствăн архитектура совечĕ хăйĕн пĕррремĕш ларăвĕнче сÿтсе-явнă. Лару СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Архитектура комитетĕнче пулса иртнĕ.

Ларура çаксем пулнă: Архитектура совечĕн членĕсем—СССР халăх художникĕсем В. И. Мухина, А. М. Герасимов, РСФСР халăх художникĕ Ф. Ф. Федоровский, академик А. В. Шусев, СССР Архитектура академийĕн действительнăй членĕсем И. В. Жолтовский, В. Н. Семенов, Б. М. Иофан, Медицина наукисен академийĕн действительнăй членĕ А. Н. Сысин тата ыттисем те.

Ларăва Архитектура комитечĕн председателĕ А. Г. Мордвинов уçнă. Çитес пилĕкçуллăхра пирĕн Совет Союзĕнче пурăнмалли çуртсем темĕн чухлĕ тумалла,—тенĕ Мордвинов юлташ,—çавăнпа та тумалли çуртсен проектне хатĕрлесе йышăнасси питех те пысăк ĕç пулса тăрать. Çавăнпа çак ĕçе халĕ Совет Союзĕнчи чи чаплă архитекторсемпе инженерсене явăçтарнă.

Ларура Архитектура комитечĕн председателĕн заместителĕ Г. А. Симонов доклад тунă. Вăл çакна палăртнă: 1946-мĕшпе 1950-мĕш çулсем хушшинче тумалли пурăнмалли çуртсем пуринчен ытларах пĕр-икĕ хутлă çуртсем пулаççĕ. Вырăнти материалсемпе усă курсан тата индустри строительствинчи чи лайăх меслетсемпе ĕçлесен, нумай хуласемпе поселоксенче çавăн пек çуртсене хăвăрт тума пулать. Хваттерсем лайăх пулмалла, вĕсенче мĕн кирли пурте пулмалла.

Икĕ хутлă тата тăвата хутлă çуртсене тунă чухне пуринчен ытла кирпĕчпе тата шлак-бетонпа усă курмалла. Стенасене тытса тăмалли блоксене, урлă хунă каштасене, пусма картлашкисене, чÿречисене, алăксене тата ытти кирлĕ япаласене те çав çуртсем валли заводсенче хатĕрлес пулать. Вара çавăн пек çуртсене пĕр чарăнмасăр çулталăкĕпех тума пулать.

Лару пĕтнĕ хыççăн Архитектура совечĕн членĕсем пурăнмалли çуртсен тата уйрăм хваттерсен проекчĕсен выставкипе паллашнă. (ТАСС).

„СССР кубокне" ЦДКА команди выляса илнĕ

Çак кунсенче Мускаври «Динамо» стадионĕнче питĕ интереслă футбол вăййи—«СССР кубокне» выляса илмелли юлашки вăйă пулса иртнĕ. Мускаври «Динамо» командипе ЦДКА команди вылянă. Совет Союзĕнче малти вырăна тухассишĕн вылянă чухне Мускаври «Динамо» команди, пĕррремĕш вырăна тухса, СССР чемпионĕ ятне илнĕ. ЦДКА команди ун чухне иккĕмĕш вырăна йышăннă («Динамо» командине вăл ун чухне те сĕнтернĕ). Ку хутĕнче ЦДКА команди Мускаври «Динамо» командине 2:1 хисеппе çĕнтернĕ. Çапла вара вăл «СССР кубокне» выляса илнĕ. Футбол вăййине курма стадиона 70.000 çын пуханнă.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлессине манмалла мар

ВАРНАР. Çĕрпмыва выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах парас тата выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма кăтартуллăн хатĕрленес тĕлĕшпе Кострома облаçĕнчи «XII-мĕш Октябрь» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн, районри чылай колхозсем хĕрÿллĕ ĕçе тытăнчĕç. «Самолет» колхоз государствăна 14.770 литр сĕт, 7.387 çăмарта, 161 килограмм çăм, 67 килограмм брынза, 6.787 килограмм аш-какай тата тир пĕтĕмпех парса, хăйĕн 1945 çулти планне тултарчĕ.

Чкалов ячĕпе тăракан колхоз та государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана тултарчĕ, çитес çулшăн 62 килограмм çăм парса хунă. Кунта халĕ выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленеççĕ.

«Гигант» колхозра фермăсенче ĕçлекенсем хăйсен вăйĕпех выльăх сурчĕсене хĕллене хатĕрлесе çитерчĕç. Выльăхсене шăварма çĕнĕрен икĕ пĕве тунă. Çак ĕçсенче уйрăмах А. Кожанова, П. Андреева, М. Солина, К. Тикенева юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Çавăн пекех кунта 230 тонна силос хывнă, 5 купа армути, 6 купа вĕлтрен хатĕрлесе хунă.

«Волга» колхозра та государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен тултарса пыраççĕ. Паянхи куна колхоз 2941 çăмарта, 2660 килограмм аш-какай парса плана тултарнă.

Анчах государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе район юлса пырать-ха. Район çăм памалли плана çеç тултарнă, аш-какай, сĕт-çу памалли плана çурри ытларах çеç тултарнă.

Ялхуçалăх ĕçĕсемпе малта пыракан районăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе те малта пулмалла. Ăна тума пур майсем те пур, çине тăрса ĕçлени çеç кирлĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парассĕ

КАЛИНИНО. Кострома облаçĕнчи «XII-мĕш Октябрь» ялхуçалăх артелĕн членĕсем чĕнсе калани çине ответлесе, районри малта пыракан «1-ое мая», «Красноармеец», «Броневик» тата ытти колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем: аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм, тир пĕтĕмпех парса татнă. Халĕ вĕсем çав продуктсене 1946 çулшăн пама тытăнчĕç. Çакăнпа пĕрлех ку колхозсем планран ирттерсе государствăна сĕт сутаççĕ. Акă, «1-ое Мая» колхоз 1.096 литр, «Большевик» колхоз 1.100 литр, «Красноармеец» колхоз 727 литр сĕт сутнă.

Анчах уйрăм колхозсем ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ пирки район государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе юлса пырать. Район октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне аш-какай парас тĕлĕшпе плана 41 процент, сĕт-çу парас тĕлĕшпе —73,8 процент, çăмарта парас тĕлĕшпе 23,3 процент, çăм парас тĕлĕшпе 55,7 процент çеç тултарнă. Уйрăмăнах ку ĕç колхозниксемпе служащисем тата единоличниксем хушшинче çителĕксĕр пулса пырать.

Çакăнпа пĕрлех кунта Уполнаркомзагăн районри работникĕсем начар ĕçленине те палăртмалла. Агент пулнă Ямшиков юлташ кунĕн-çĕрĕн ĕçсе çÿресе, хăйĕн участокĕнчи хатĕрлев ĕçне пĕтĕмпех япăхтарса янă. Çавăн пекех Быкова агент та хăйĕн ĕçне япăх туса пырать.

Райсоюз приемщикĕсем çăмартана квитанцисĕр, ахаль хут çине кăна çырса илнĕ пирки, çăмартана урăх çĕре салаткаланисем те тĕл пулкалаççĕ. Кун пек ĕçсем Ермошка Ялновĕнче пулнă. Çавăн пекех райсоюз хур-кăвакал тата ытти чăх-чĕп аш-какайне илме те хатĕр мар. Çавна пула, кунта колхозсенчен аш-какай пама пыракансене каялла яраççĕ.

Малта пыракансен фермисенче

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районра малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. «Труженик» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă.

Колхоз председателĕ Меркулов юлташ выльăх витисене хĕле лайăх хатĕрлессишĕн тăрăшса ĕçлерĕ. Выльăх витисем пурте таса те юсавлă. Вĕсене выльăхсене хĕл каçарма лайăх юсаса, ăшă тытмалла тунă. Кăçал 62 ĕне вырнаçмалăх çĕнĕ вите тунă.

Пысăк выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма пур тĕрлĕ выльăх-апачĕсене те çителĕклех хатĕрленĕ. Çамрăк путексене валли 20 лав çулçăллă апат пухса хунă.

Фермăсен заведующийĕ пулса иккĕмĕш çул ĕнтĕ çамрăк хĕр Ольга Кузнецова ĕçлет. Вăл ферма работникĕсен ĕçне тĕрĕс организацилет. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ ÿссех пырать. Çавна пула колхоз 1945 çулта государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли хăйĕн обязательствине сентябрь уйăхĕнчех пĕтĕмпех тултарчĕ.

«Совет» колхозăн 4 ферма. Кашни фермăрах государство планĕнче пăхнă чухлĕ выльăх-чĕрлĕх пур. Фермăсенчи выльăхсене лайăх хĕл каçарас шутпа, витесене юсанă, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ.

— Эпир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе районта мала тухнăшăн 1944 çулта ВКП(б) райкомĕпе райисполкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илтĕмĕр. Вăл Ялава кăçал та хамăр алăрах тытса тăрăпăр,—тет «Совет» колхоз председателĕ Мокеев юлташ.

Çавăн пекех «Радио», «Коминтерн», «Путь социализма» колхозсем те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Ку колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă, выльăх витисене хĕле лайăх хатĕрленĕ.

П. ТИХОНОВ.

Лайăх ĕçлекен почта уйрăмĕ

КАНАШ. Янкăлч ял Советĕнчи почта уйрăмĕ лайăх ĕçлет. Начальник пулса кунта Елизавета Мордвинова юлташ ĕçлет. Вăл кирек епле çанталăкра та Канашран çурран хаçат-журналсем илсе килсе тăрать. Çĕнĕ хаçатсемпе çырусене вăхăтра çитерес тесе, вăл вĕсене колхозниксем ĕçе тухиччен ирех валеçме тытăнать. Валеçсе пĕтерменнисене вара колхозниксем ĕçленĕ çĕре тухса валеçет.

Мордвинова юлташ агитаци ĕçне те лайăх туса пырать. Кашни хаçат килмессеренех вăл çĕнĕ хыпарсем çинчен колхозниксене кĕскен ăнлантарса тата вуласа парать, мĕнле статьясемпе заметкăсене вуламаллине каласа парать. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна ял Совет исполкомĕ темиçе хутчен те тав тунă тата премисем панă.

Н. ЯКОВЛЕВ.

Пĕчĕк фельетон

Кутăн пуçлăх

Кĕçех пĕр çулталăк мар, 9 уйăхран виç кун кăна катак пулать... Анчах йĕркипех каласа парар.

Клавдия Ивановна Челиверова Сентерварринчи горпо системинче 6 çул хушши ĕçленĕ. Çав вăхăтра вăл ниепле шала та кĕмен. Анчах никĕн куçа курăнса килмест, теççĕ.

Пĕр кун Сентерварринче аслати аватнă пек, каçалли январĕн 6-мĕшĕнче горпо председателĕ Иванов юлташ кĕтмен çĕртен приказ çырнă. Çав приказ тăрăх, 2-мĕш пекарнăри бригадира Челиверова юлташа ĕçрен кăларса пăрахнă.

Мĕншĕн? Кăна горпо председателĕ Иванов хăй çеç пĕлет пуль...

Ĕçсем малалла пĕр-пĕр романри пекех çивĕчленсе пыраççĕ. Апрелĕн 4-мĕшĕнче, Челиверова жалоби тăрăх, çак ĕçе потребкооперации профсоюзĕн районри комитечĕ пăхса тухать. Вăл Челиверова юлташа ĕçе каялла илме решени йышăнса хăварать. Ĕç хăй шутлана пек мар, урăхла пулса пынипе кура, Иванов юлташ Челиверована уголовнăй йĕркепе айăплама следстви органĕсене çырса парать. Апрелĕн 5-мĕшĕнче Челиверова халĕ пĕр салтавсăрах ĕçрен кăларни çинчен суда жалоба çырать.

Июлĕн 2-мĕшĕнче Сентерваррнчи НКВД отделенийĕ Челиверова ĕçĕнче нимĕнле преступлени те тупман пирки унăн ĕçне пĕтерни çинчен пĕлтерет. Çакăн хыççăн Челиверова юлташ Иванов патне заявлени çырать. Унăн заявленийĕ çине пуçлăх çапла çырса хурать: «На работу на данную бригадиром восстановить не могу. Если желает больше работать горпо, другую работу назначу».

Июлĕн 19-мĕшĕнче çак ĕçе халăх сучĕ пăхса тухать. Суд Челиверована каялла ĕçе илме хушать. Январь уйăхĕнчен пуçласа хăй айăпĕпе мар прогул тунăшăн горпо председателĕнчен Челиверова валли 750 тенкĕ укçа шыраса илмелле тăвать. Иванов ку решенипе, паллах, килĕшме пултараймасть, вăл Верхсуда кассаци çырать.

Августăн 14-мĕшĕнче ĕçе Верхсуд пăхса тухать. Вăл та халăх сучĕ Челиверована ĕçе каялла илмелле тунине çирĕплетсе парать.

Ĕç пĕтмелле пек туйăнать, анчах Иванов çаплах лăпланмасть-ха: вăл хăйĕн приказне çаплах тĕрĕс пек шутлать. Вара судисполнитель Иванов пирки акт çырать, Челиверована ĕçе илмесен, Ивановран кашни кунах укçа шыраса илмелле тăвать. Верхсуд решени йышăннăран вара икĕ уйăха яхăн иртет, Иванов çав-савах Челиверована ĕлĕкхи вырăна илмест. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ хушнă хыççăн тин вăл ăна ĕлĕкхи ĕçе илме килĕшет. Ку ĕç октябрĕн 5-мĕшĕнче тин пĕтет.

Кĕçех пĕр çулталăк мар, 9 уйăхран виç кун кăна катак ĕçсĕр пурăнать Челиверова. Иванов пуçлăх çапла никама ĕненмен, никама шанман, никама пăхăнман çын пулса тăрать. Кутăн пуçлăх! Кузьма Прутков çавăн пеккисем пирки тахçанах çапла çырса хăварнă: «Слон читлĕхĕ çине «буйвол» тесе çырнă пулсан,—куçпа курнине ан ĕнен», тенĕ.

Ку ĕнтĕ вăл Иванов пуçлăхăн хăйĕн характерĕ, тейĕпĕр. Анчах çав йышши «характер» совет гражданĕсен тивĕçлĕхне сиен кÿме тытăнсан, ун пек «характера» вăхăтра тÿрлетмелле. Чипер ĕçлесе пынă çынна ирĕксĕр прогул тутарнăшăн Ивановран укçа кăна шыраса илни çителĕксĕр пек туйăнать. Пирĕн çĕршывра этем тивĕçлĕхне нимĕнле укçапа та хакласа виçмеççĕ. Çынран çавăн пек киревсĕр мăшкăлланăшăн Иванов пуçлăх пысăкрах ответ тытмалла.

И. САЛАМБЕК.

Конев Маршал Прага хулине пырса кайнă

ПРАГА, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 12-мĕшĕнче Прага хулине Совет Союзĕн Маршалĕ Конев пынă.

Аэродромра ăна нацин оборонин министрĕ Свобода генерал, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ян Масарик, Чехословаки çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ Бочек генерал, çар представителĕсем, Чехословаки влаçĕсен представителĕсем, Совет Союзĕн посолĕ Зорин юлташ, Жадов генерал-полковник, Посольство советникĕ Чичаев тата ыттисем те хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Конев Маршал хисеплĕ хурал парадне йышăннă. Оркестр Совет Союзĕпе Чехословаки гимнĕсене каланă. Пухăннă халăх Конев Маршала питĕ хавасланса йышăннă.

Кăнтăрла Конев Маршала Чехословаки премьер-министрĕ Зденек Фирлингер йышăннă, ун патĕнче Конев Маршал ячĕпе апатлану пулса иртнĕ. Апатланура çаксем пулнă: вице-премьер-министр Готвальд, министрсем—Свобода, Масарик тата Странский, статс-секретарьсем—Клементиспа Ферьенчик, Совет Союзĕн посолĕ Зорин юлташ тата ыттисем те.

Каярахпа Конев Маршала Чехословаки республикин президенчĕ Бенеш доктор йышăннă. Йышăнура премьер-министр Фирлингер тата Совет Союзĕн посолĕ Зорин юлташ пулнă.

Çав кун Совет Союзĕн Маршалĕ Конев Прагăран тухса кайнă.

* * *

Прагăра тухакан хаçатсем Совет Союзĕн Маршалĕ Конев Прагăна пыни çинчен питĕ тĕплĕн çырса пĕлтернĕ. Çав май хаçатсем Чехословакипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăха пысăка хурса çыраççĕ, Конев Маршал Прага хулине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларас тĕлĕшпе пысăк ĕç тунине уйрăмах палăртса çыраççĕ.

ВЕНА ХУЛИНЧЕ СОВЕТ ФУТБОЛИСЧĔСЕМ ÇĔНТЕРНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вена хулинчен çапла пĕлтерет: октябрĕн 14-мĕшĕнче Венăри стадионра Англипе Совет Союзĕн командисем футболла вылянă. Совет команди çĕнтернĕ. Футбол пÿскине вăл 6 хутчен çапса кĕртнĕ, Англи команди мĕн пурĕ те пĕр хут кăна çапса кĕртнĕ. Футболла вылянă чухне стадионра Совет Союзĕн оккупаци çарĕсен командующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Конев тата Англин оккупаци çарĕсен командующийĕ генерал-лейтенант Ричард Маккрири пулнă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО ДЕПАРТАМЕНЧĔ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство департаменчĕ пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: государство департаменчĕ Союзниксен Австрири советĕнчи Америка представительне Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем Австрин вăхăтлăх правительствине йышăнма хатĕрри çинчен пĕлтернĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИРИ ВĂХĂТЛĂХ НАЦИ ПУХĂВНЕ СУЙЛАНИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

ПРАГА, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Прагăпа Брно хулисенче Чехословакири вăхăтлăх наци пухăвне тата облаçсенчи наци комитечĕсене суйланă.

Прагăра правительство ячĕпе шалти ĕçсен министрĕ Вацлав Носек, Брнора—почтăпа телеграф министрĕ Франтишек Гала сăмахсем тухса каланă.

Политикăллă 4 партин (коммунистсен партийĕн, социал-демократсен партийĕн, халăх социалисчĕсен партийĕн тата халăх партийĕн) представителĕсем халăх фрончĕн партийĕсем кандидатсен пĕр списокне тума йышăнни çинчен каласа панă хыççăн, Чехипе Моравинчи облаçри наци комитечĕсен членĕсене суйланă. Çавăн пекех тата Чехословакири вăхăтлăх халăх пухăвне Чехипе Моравинчен 200 депутат тата депутатсен кандидачĕсене 200 çынна суйланă. Наци пухăвне Словакирен 100 депутата тата Словакири облаçри наци комитечĕ пулса тăракан Словакири наци советне 1945 çулхи августăн 29-мĕшĕнче Бански Быстрицери съездра суйланă пулнă.

Партисем пĕр-пĕрипе килĕшнĕ тăрăх, наци пухăвне Чехословакири компартирен, социал-демократсен партийĕнчен, халăх социалисчĕсен партийĕнчен тата халăх партийĕнчен 40-шар депутат суйланă. Профсоюзсен центральнăй советĕнчен—10 депутат, Чехири çĕрĕç союзĕнчен—8 депутат, суту-илÿпе пурăнакансен тĕп союзĕнчен—2 депутат, алăстаçсен тĕп союзĕнчен—2 депутат, кооперацин тĕп советĕнчен—4 депутат, наци физкультурин тĕп комитетĕнчен—3 депутат, Чехири çамрăксен союзĕнчен—3 депутат суйланă. Кунсăр пуçне, обществăллă пурнăçри паллă çынсене 8 çынна: Неедлы профессора, Белеградек профессора, Галас писателе, Фердинанд Пероутка журналиста, Владимир Клепанда профессора, Вацлав Китил профессора, Владимир Черверкăна тата Ярослав Сжегулка адвоката депутата суйланă.

Правительство членĕсенчен çаксене суйланă: Неедлы министра, Зденек Фирлингер премьер-министра, Клемент Готвальд, Йозеф Давид, Ян Шрамек вице-премьерсене, ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Вацлав Носека, информаци министрне Вацлав Копецкие, шалти суту-илÿ министрне Губерт Рипка доктора, юстици министрне Ярослав Странский доктора, промышленность министрне Богумил Даушмана, снабжени министрне Вацлав Майера, почтăпа телеграф министрне Франтишек Гала, сывлăх министрне Адольф Прохазка доктора.

Çĕрĕçĕпе пурăнаканнисене—30, рабочисене—26, обществăллă тата частнăй служащисене—67, адвокатсене—7, усламçăсемпе предпринимательсене—10, университет профессорĕсене—9, журналистсене—13, писательсене—3, учительсене — 10, салтаксене—3, судьясене тата ытти профессисен представителĕсене—1 çынна депутата суйланă. Хĕрарăмсене 15 çынна суйланă.

Наци пухăвне маларах суйланă депутатсен составĕнче 40 коммунист, 40 демократ тата нациллĕ организацисемпе профсоюзсен организацийĕсенчен 20 депутат пулнă.

Прагăри область съездĕнче сăмах тухса каланă чухне шалти ĕçсен министрĕ çапла каланă: вăхăтлăх наци пухăвĕн малтанхи ларăвĕ кăçалхи октябрĕн 28-мĕшĕнче пулмалла. Чехири нациллĕ область комитетне коммунистсенчен—24, социал-демократсенчен — 24, халăх социалисчĕсенчен—24, халăх партийĕнчен—24, профсоюзсен центральнăй советĕнчен—5, Чехири çĕрĕç союзĕнчен—3, суту-илÿпе пурăнаканнисен тĕп союзĕнчен—1, алăстаçсен тĕп союзĕнчен—1, кооперацин тĕп советĕнчен—2, наци физкультурин тĕп комитетĕнчен—2, Чехири çамрăксен союзĕнчен—2 тата ытти обществăллă организацисенчен—7 çынна суйланă.

ЭЛЕОНОРА РУЗВЕЛЬТ СТАТЬИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт госпожа хăйĕн статьинче çак хăрушлăх çинчен асăрхаттарать: нимĕç халăхĕ Пĕрлешÿллĕ Штатсен оккупаци çарĕсене нацистсен идеологине вĕрентме—вырăссене, французсене тата еврейсене курайми туса хума пултарать, тет. Элеонора Рузвельт американецсене нимĕçсем пĕтĕм тĕнче асапĕшĕн ответ тытмаллине аса илме чĕнет.

«Чи малтан Америкăпа Англи промышленникĕсен интересĕсене шута илекен экономикăллă советниксем çапла калаççĕ,—тесе çырать Рузвельт госпожа: — Германи пурăнма пултартăр тесен, пирĕн Германи промышленноçне юсаса хута ямалла, теççĕ. Германире пулнă çынсем пурте пĕлеççĕ: нимĕçсем Европăри халăхсенчен пуринчен те сахалтарах асап курнă. Эпир вĕсене çĕнĕ вăрçă пуçласа яма каллех вăй парасшăн-и?», тет.

ГРЕЦИРЕ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТĂВАС ПИРКИ

АФИНЫ, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Греци пĕр эрне ĕнтĕ правительствăсăр пурăнать. Софулис центрти партисен представителĕсенчен правительство тума хăтланни ăнăçман хыççăн тата монархистсен партийĕ правительствăна либералсене кĕртме килĕшмен хыççăн, регент ĕнер каçхине Англи посолĕпе Липерпа калаçнă та нихăш партире те тăман Дудороса «политика çыннисенчен» правительство тума хушнă. Çав правительствăна политика тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ шухăшлакан çынсем, анчах та партисен паллă деятелĕсем пулса тăманнисем кĕмелле.

АРГЕНТИНĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Аргентина правительстви вырăнтан тухнă хыççăн Аргентинăри власть икĕ çын аллине—Авалос генералпа Лима генерал аллине лекнĕ. Аргентина правительствин тинĕс-çар министрĕ Лима генерал вăхăтлăха ют çĕршыв ĕçĕсен, юстицин тата сутĕç министерствисене те ертсе пырать. Çар министрĕ Авалос генерал шалти ĕçсемпе финанс министрĕсен ĕçĕсене те туса тăрать.

Уругвайран пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăри политикăллă партисем Авалоспа тата Лимапа пĕрле ĕçлеме килĕшмеççĕ. Аргентинăри лару-тăру тата çакăн пирки те çивĕчленсе пырать: Аргентина полицийĕ Аргентина вице-президенчĕ пулнă Перон полковника пулăшма хатĕр тăрать. Перон халĕхи вăхăтра пĕр çар судни çинче пурăнать, тесе пĕлтереççĕ.

ПАНАМА АРГЕНТИНĂПА ÇЫХĂНУ ТЫТМА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Панама парламенчĕ хăйĕн правительствине Аргентина правительствипе дипломатипе суту-илÿ тĕлĕшĕнчен çыхăну тытма пăрахма ирĕк панă.

ЛАВАЛЕ ВĔЛЕРНĔ

ПАРИЖ, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: октябрĕн 15-мĕшĕнче кăнтăрла суд приговорĕ тăрăх Фрэн тĕрми картишĕнче Пьер Лавале персе пăрахнă. Хăйне персе пăрахассине пĕлсен, Лаваль наркăмăш ĕçсе вилме хăтланнă, вăл çынсем асăрхиччен наркăмăш çăтса янă. Анчах врачсем çакна вăхăтра сиснĕ, вара Лаваль çапла хăтланни ăнăçлă пулман.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕНЧИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). США-ри сăрт-ту промышленноçĕнче ĕçлекен 180.000 рабочи халĕ те забастовка тăвать. Ĕç министрĕ Швелленбах профсоюз представителĕсемпе кăмрăк промышленникĕсене килĕштерме хăтланать пулин те, вĕсем пĕр-пĕрипе килĕшмеççĕ. Профсоюз представителĕсем темиçе вунă шин мастера тата рабочисен ĕçĕсене пăхса тăракан çынсене официальнăй йĕркепе профсоюз членне кĕнине йышăнма ыйтаççĕ. Федерэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: кăмрăк промышленникĕсем калаçусене юри вăраха хăварма тăрăшаççĕ, çавăнпа вĕсем çĕршыва сахалрах кăмрăк парса рабочисем çинчен урăхларах шухăшлаттарма пикенеççĕ.

Грузчиксен профсоюзĕн председателĕ Райан Нью-Йоркри грузчиксене забастовкăна пĕтерме хушнă пулин те, грузчиксем забастовка тума пăрахман. Райан каланă тăрăх, «грузчиксен забастовкине ют çынсем ертсе пыраççĕ».

«Дейли уоркер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, забастовкăна хутшăннă рабочисен ытларахăш пайĕ малалла забастовка тума йышăннă. Грузчиксен профсоюзĕн исполкомĕ забастовка тăвакан грузчиксем майлă пулнă. Исполком çапла пĕлтернĕ: Нью-Йоркри грузчиксем халь тума тăрăшакан условисем тăватă çул хушши ĕнтĕ США-н хĕвелалăç çыранĕнче законлă пулса тăраççĕ.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çар мобилизаци директорĕ Смайдер ĕçукçи тĕлĕшпе правительствăран хăйĕн политикине каласа пама хытăрах та хытăрах ыйтать, çавăнпа вăл забастовкăсен юхăмне чарса лартма шутлать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Районри хаçатсене пăхса тухни

Чи кирлине курма пĕлесси

Кашни ĕçрех чи кирлине вăхăтра туйса илме, витĕр курма пĕлес пулать.

Пирĕн районсем умĕнче халĕ хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчи чи пысăк задача—ноябрĕн 1-мĕшĕччен государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татас тата авăн çапса пĕтерес задача тăрать. Районсенчи партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсемшĕн, ялти коммунистсемпе комсомолецсемшĕн, колхозниксемпе колхозницăсемшĕн халĕ государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене тултарассинчен пахарах задача урăх çук.

Районсенчи парторганизацисен боевой органĕсем пулса тăракан райхаçатсен хальхи вăхăтра хăйсен пĕтĕм ĕçне çак тĕп лозунга пăхăнтармалла та ĕнтĕ.

Акă, Советски районри «Совет ялавĕ» хаçата (редакторĕ Я. Сигаев) илсе пăхар. Июль уйăхĕнчен пуçласах ку хаçатра тырпул пухса кĕртессипе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕç тĕп вырăн йышăнса тăрать. Редакци çак тĕп ыйтупа çырнă материалсене номертен номерех чи курăмлă çĕре тата чи нумайрах та тĕплĕрех парса пырать. Çапла вăл июлĕн 26-мĕшĕнчи номерте «Хуçалăхпа политикăллă чи пысăк задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртер!» ятлă умстатья çырать. Унра редакци партипе правительствăн постановленине ăнлантарса парать, районри колхозсенче ĕç мĕнле пынине тĕплĕн тишкерсе тухать. «Çĕнтерÿ тырпулне пухса кĕрме пур енчен те тĕплĕн хатĕрлесе çитерĕр» ятлă «шапка» айне виçĕ колонкăпа колхозсенчен килнĕ заметкăсене кĕртнĕ.

Августăн 9-мĕшĕнчи номерте редакци «Тырра хăвăрт та тăкаксăр пухса кĕртер» ятлă умстатья çырнă. Пĕрремĕш страницăра «Колхоз уйхирĕсенче» ятлă пысăк пай туса, колхозсенчен килнĕ хыпарсене пичетленĕ. Унта пурĕ 9 заметка кĕртнĕ. Вĕсем пурте кĕске те çыпăçуллă, колхозсенчи ĕçе усăмлăн çутатса параççĕ. Çак номерте эпир «Новый путь», «Добролет» колхозсем хăйсен пирвайхи тыррине государствăна пани çинчен калакан малтанхи хыпарсемпе паллашатпăр. Иккĕмĕш страницăра виçĕ колонкăпа партипе пурнăç пайĕ тунă. Унта политикăллă-массăллă ĕçĕн хальхи задачисем çинчен, колхозсенчи коммунистсен пухăвĕсене мĕнле ирттересси çинчен парторганизацисене [illegible] паракан статьясем пичетленĕ.

Уйхирти ĕç хĕрсе пынă май хаçат та хăйĕн тĕп ĕçне вайлатса, сарса пырать. Тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ыйтупа вăл юлашки 7 номерте умстатья, ятарласа 7 полоса çырса кăларнă. Редакци кашни полоса валли витĕмлĕ лозунгсем парать. Акă, сăмахран, августăн 30-мĕшĕнчи номерте «Юлташ! Ĕçре хастарлă пул, хăвăрт пуçтарăнтăр тырпул!» тесе çырнă. Умстатьясене редакци кашни колхозник чĕри патне пыракан сăмахсемпе çырма тăрăшать. Сентябрĕн 13-мĕшĕнчи умстатьяра хаçат: «Колхозник юлташ! Ĕçри ăнăçлăх санран килет. Эсĕ хирте тата йĕтем çинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тăван çĕршывăн вăй-хăватне хăпартать», тесе çырать.

«Совет ялавĕ» хаçат государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе пурнăçа кĕртнĕ колхозсен ĕçне курăнмалли вырăнта шултăра саспаллисемпе çырса кăтартать. Çакăн валли вăл ятарласа «Сăмах панă—пурнăçланă» ятлă отдел тунă. Малта пыракан колхозсем, хăйсен обязательствисене тултарнă хыççăн, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама тытăнаççĕ. Хаçат ку ыйтупа Тури Ачакри Буденный ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем чĕнсе каланине пичетлесе кăларать (октябрĕн 4-мĕшĕнчи номер). Çак патриотла пуçарăва пур колхозниксене те йышăнса илме чĕнет, ку ĕç мĕнле саралса пыни çинчен çырать.

Малта пыракансен опытне кăтартнипе пĕрлех, хаçат тырă хатĕрлес ĕçе хирĕç тăракансене, саботажниксене тăрă шыв çине кăларать. Вĕсемпе кĕрешме парти райкомне пулăшать.

Çавăн пекех хаçат ялти коммунистсемпе комсомолецсен ертсе пыракан вырăнне лайăх çутатса тăрать.

Советски район государствăна тырă парас тĕлĕшпе малти вырăнсенчен пĕрине йышăнса тăрать пулсан, çакăнта, паллах, райхаçатăн ĕçĕ те палăрса тăнине курмалла.

Пачах урăхла тĕслĕхсем куратпăр эпир Шупашкар районĕнчи «Ленин çулĕпе» хаçат ĕçĕнче (хаçат редакторĕ Г. Петров).

Ку хаçат редакцийĕ хальхи вăхăтри чи кирлĕ ĕçе курса илме пĕлмест. Хаçат номерĕсене пăхсан, редакци хăй умне мĕнле тĕллев лартнине те пĕлме хĕн. Пĕтĕмпех сапаланчăк. Хаçат хăйĕн страницисене районăн тĕп ĕçне тĕп вырăн паман. Акă, сăмахран, июлĕн 26-мĕшĕнчи номерте районри ял Совечĕсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕ чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Канашлу сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татма пĕтĕм район ячĕпе сăмах панă. Анчах редактор ку номерте тухнă хăйĕн умстатьинче те çав обязательство çинчен пĕр сăмах та шарламан. Кайран вара ăна пĕтĕмпех манса кайнă. Калас пулать, Шупашкар районĕ государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне мар, октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне те тултараймарĕ.

Хаçат августăн 16-мĕшне çитиччен государствăна тырă парас тĕлĕшпе колхозсенче ĕç мĕнле пыни çинчен нимĕн те çырмасть. Çав кун тухнă номерте те Илпеш ял Советĕнчи колхозсем «вырнă тырра авăн çапма тата государствăна тăратма кирлĕ пек тытăнман», тесе «палăртса» хăварнисĕр пуçне, урăх ку тĕлĕшпе пĕр ыра хыпар та илтме çук. Августăн 30-мĕшĕнчи номерте хаçат «Колхоз тыррине вăрланăшăн», «Графика пăснăшăн» ятлă икĕ заметка — суд хроникисем пичетленĕ. Урăх татах нимĕн те çук.

Редакци хăйĕн материалĕсене ăçта май килнĕ, унта пĕтĕркелесе чикет. Сентябрĕн 6-мĕшĕнчи номерте редакцирен çырнă «график —закон!» ятлă статьяна юлашки страницăн чăн юлашки колонкине лартса янă. Урăхла тума лайăх майсемех пулнă, анчах редактор шухăшласа пуçне сĕмĕрессĕн пулман.

Редактор хăйĕн пуçне хĕрхенни номертен номерех палăрса пырать. Район тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас ĕçсенче кая юлса пырать пулин те, редактор сентябрĕн 13-мĕшĕнчи умстатьяра «районри колхозсем тырпул пухса кĕртес ĕçре пысăк çитĕнÿ турĕç» тесе, октябрĕн 11-мĕшĕнче «районри колхозсем уйхирти тырпулсене пухса пĕтерчĕç, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлаççĕ», тесе çырать. Хускатас, васкатас вырăнне, хаçат çакăн пек сывăрттаракан кĕвве тăсса ларать.

Районри колхозсенче партипе комсомол организацийĕсем çукпа пĕрех. Хаçат вĕсем çинчен нимĕн те çырмасть.

Хаçатра пичетлекен сводка пĕр-пĕр ĕç мĕнле пынине кăтартса пама тивĕçлĕ. Шупашкар райхаçачĕ сводкăсене те никам ăнланмалла мар шарадăсем пек пичетлет. Çав сводкăсенче хăш ял Совечĕ мĕнле ĕçленине курма çук, кашни ĕç тĕлĕшпе кам мĕнле вырăн йышăннине çеç кăтартнă.

Райхаçатăн чĕлхи те большевикла чĕлхе мар, темĕнле сÿсленсе тăракан чĕлхе. Акă октябрĕн 11-мĕшĕнче тухнă номерти тĕслĕхсем: «Колхоз авăн çапас ĕçре машинăсемпе туллин усă курмасть, молотилка пур, анчах унпа çителĕксĕр усă курассĕ». Çав номертех икĕ заметка («Юлса ыйма сăлтав çук» ятлă заметкăсем) çапла пуçланаççĕ: пĕринче—«Государствăна тĕштырă тăратмалли вăхăт тахçанах иртрĕ»; тепринче—«...çĕрулми кăларма вăхăт иртрĕ», тесе çырнă.

Çапла вăхăт иртсе пырать. Шупашкар райхаçат редакцийĕ çаплах сÿрĕк юрра юрласа ларать.

Кунта эпир ик хаçатăн икĕ тĕрлĕ ĕçне кăтартса патăмăр. Пĕри—«Совет ялавĕ» хаçат чи кирлĕ ĕçе вăхăтра курса илме тăрăшать, паянхи тĕп темăна тĕп вырăн парать; тепри вара—Шупашкар райхаçачĕ нимĕн те тăрăшмасть, районăн пурнăçĕнчен аякра тăрать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00886 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.